УДК 1174
DOI 10.31483/r-32847

***В.И. Игнатьева***

# К ВОПРОСУ ОБ ОБУЧЕНИИ ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ

***Аннотация***: *в данной статье освещаются главные принципы, которые должны быть в основе обучения чувашскому языку в образовательных организациях с многонациональным составом обучающихся в соответствии с федеральными государственными образовательными стандартами. Особое внимание уделено лингвокультурологическому принципу обучения чувашскому языку. Под лингвокультурологическим обучением понимается овладение учащимися основами народной культуры, умение анализировать тексты, содержащие лингвокультурологический материал, усвоение ценностной лексики. Автор приходит к выводу, что обучение языку немыслимо без приобщения обучающихся к истории и культуре чувашского народа.*

***Ключевые слова***: *чувашский язык, родной язык, второй язык, общение, речь, принципы.*

***V.I. Ignateva***

# TO THE QUESTION ABOUT TEACHING THE CHUVASH LANGUAGE

***Abstract***: *this article highlights the main principles that should be the basis of learning the Chuvash language in educational institutions with a multinational composition of students in accordance with Federal state educational standards. Special attention is paid to the linguocultural principle of teaching the Chuvash language. Under linguistic and cultural learning refers to the students master the basics of the national culture, the ability to analyze texts containing linguistic and cultural material, the absorption value of vocabulary. The author comes to the conclusion that language teaching is unthinkable without familiarizing students with the history and culture of the Chuvash people.*

***Keywords***: *Chuvash language, mother tongue, second language, communication, speech, principles.*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

***В.И. Игнатьева***

## *Чăваш чĕлхине вĕрентес ыйту тавра*

***Аннотаци**: статьяра палăртнă шухăшсем тĕрлĕ чĕлхеллĕ ачасене чăваш чĕлхи вĕрентес ĕçе вĕренĕвĕн патшалăх стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн йĕркелеме май параççĕ. Ĕçе йĕркелемелли тĕп принципсене, ĕç тĕллевĕсене, содержанине тата кĕтекен результатсене пĕр çыхăнура, системăра палăртма пулăшаççĕ. Автор шухăшĕпе, тĕрлĕ чĕлхеллĕ ачасене чăваш чĕлхи вĕрентес ĕçе лингвокультурологи принципне тĕпе хурса йĕркелени вырăнлă.*

***Тĕп сăмахсем**:чăваш чĕлхи, тăван чĕлхе, иккĕмĕш чĕлхе, хутшăну, пуплев, тĕп шухăшсем.*

Пирĕн нумай нациллĕ çĕр-шывра халăхсем пĕр-пĕринпе хутшăнмалли хатĕр – вырăс чĕлхи, анчах та кашни халăх пурнăçĕнче унăн хăйĕн тăван чĕлхи калама çук пысăк вырăн йышăнать. Вăл халăхăн культура пуянлăхĕсене упраса хăварма, вĕсене малалла аталантарма май парать, аслă ăрусене çамрăккисемпе çыхăнтарать.

Тĕнчери темиçе пин чĕлхе хушшинче чăваш чĕлхи чылай çӳллĕ шайра аталаннă, пуян чĕлхе шутланать. Мĕн авалтан чăвашсем хăйсен чĕлхине куç шăрçи пек упраса, çултан-çул пуянлатса, якатса пынă. Хальхи вăхăтра вара çак пуянлăха çухатас хăрушлăх палăрма пуçларĕ, мĕншĕн тесен чĕлхен малашлăхĕ унпа калаçакан çынсемпе тачă çыхăннă. Кулленхи хутшăнура, пурнăçра анлă усă кураççĕ пулсан чĕлхе пурăнать, пуянланса-аталанса пырать. Чăвашла калаçакан çынсен шучĕ вара çултан-çул чаксах пырать.

Чăвашла калаçакан çынсен шучĕ чакнин сăлтавĕсем чылай. Вĕсенчен пĕри – чăваш чĕлхипе вĕренӳ системинче сахал усă курни. Шкулчченхи вĕренӳ организацийĕсенчен пуçласа вăтам шкул таранах пĕлӳ-хăнăху илмелли тĕп чĕлхе вырăс чĕлхи пулса тăчĕ. Чăваш чĕлхине тăван чĕлхе пек вĕренекенсен шучĕ те çултан-çул чаксах пырать. Паллах, ашшĕ те, амăшĕ те чăваш ачасем вĕренекенсем хушшинче чылай, анчах та психолингвистсем каланă тăрăх, тăван чĕлхе вăл атте-анне чĕлхи кăна мар, тăван чĕлхе вăл – хутшăну, шухăшлав чĕлхи. Калаçнă чух хăш чĕлхе чи малтан «чĕлхе çине килет», çын хăш чĕлхепе шухăшлать, хăш


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

чĕлхепе усă курма меллĕрех ăна – çав чĕлхе тăван чĕлхе. Енчен те ашшĕ-амăшĕ хăйĕн ачипе мĕн пĕчĕкрен килте вырăсла çеç калаçнă пулсан, ача садĕнче те вăл вырăсла пуплеве çеç хăнăхса пынă пулсан, паллах, тăван чĕлхе çак ачашăн, хăй чăваш ачи пулсан та, вырăс чĕлхи пулса тăрать. Вара ăна та, ытти халăх ачисене вĕрентнĕ пекех, чăвашла тăван мар е иккĕмĕш чĕлхе евĕр вĕрентме тивет.

Хальхи вăхăтра эпир республикăри тĕрлĕ халăх ачисем вĕренекен шкулсенче (вĕсенчен ытларахăшĕ хуласемпе посёлоксенче вырнаçнă) чăваш чĕлхи вĕрентнин тĕп тĕллевне ачасене кулленхи пурнăçра чăвашла хутшăнма вĕрентесси тесе палăртатпăр.

Ачасене кулленхи пурнăçра чăвашла хутшăнма вĕрентесси вĕсене пуплев ĕçĕ-хĕлĕсене чăвашла пурнăçлама хăнăхтарассипе çыхăннă. Пуплеве аталантарасси – çав тери кăткăс та нумай енлĕ ĕç. Ачан чăвашла пуплевĕ аталантăр тесен ăна уроксенче чăвашла калаçнине итлесе ăнланма, хăйне те пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн чăвашла калаçма, каярах вулама та, çырма та хăнăхтарса пымалла. Çак ĕçсем пĕтĕмпех чĕлхе материалне пĕлни çинче никĕсленеççĕ. Чĕлхене вĕрентмесĕр пуплеве аталантарма май çук, апла пулсан ачасене мĕн пĕрремĕш кунран пуçласах чĕлхе ăслăлăхĕн тĕрлĕ сийĕсенчи материалпа паллаштарса пымалла. Кунта чăваш чĕлхинчи уйрăм сасăсене, сасă çыхăнăвĕсене тĕрĕс калама вĕрентни те, пусăм лартма хăнăхтарни те, интонацие чухлани те, пĕлекен сăмахсен, сăмах майлашăвĕсен йышне ӳстерсе пыни те, вĕсене пĕр-пĕринпе тĕрĕс çыхăнтарса ансат калăплă предложенисем, текстсем йĕркелеме вĕрентни те кĕреççĕ. Кунсăр пуçне ачасене чăваш чĕлхинчи пулăмсене вырăс чĕлхинчи пулăмсемпе танлаштарма хăнăхтарса пымалла. Çапла майпа вĕсен ăс-тăнĕ аталанса пырать, чĕлхе туйăмĕ çуралать. Çак ăслай вĕсене виççĕмĕш чĕлхе вĕреннĕ чух та кирлĕ пулать.

Чăваш чĕлхине хула шкулĕсенче вĕрентес ĕçĕн сапăрлăх аспекчĕ те калама çук анлă. Чи малтанах, чăваш чĕлхи урокĕсенче пĕр-пĕринпе харкашмасăр, пĕр-пĕрне кӳрентермесĕр шăкăл-шăкăл калаçса-хутшăнса пурăнма вĕрентмелле ачасене. Уроксенче чăваш, вырăс тата ытти халăхсен мĕн авалтан çирĕпленнĕ ырă енĕсене, ĕçĕсене кăтартса парса ачасенче çав енсене аталантарма тăрăшмалла.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Юлашки вăхăтра «толерантность» çинчен нумай калаçаççĕ. Шăпах чăваш чĕлхи урокĕсенче, чăваш чĕлхипе çыхăннă класс тулашĕнчи ĕçсенче аталантарма меллĕ те ĕнтĕ ачасенче çак ырă туйăма. Тĕрлĕ халăх ачисене пĕр-пĕрин чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине, сăмах-юмахне, кĕвви-юррине хисеплеме вĕрентмелле, вара вĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пĕр çемьери пек пурăнма вĕренĕç. Апла пулсан, вĕренӳ содержанийĕнче çӳлерех асăннă тĕллеве пурнăçламалли материал анлă пулмалла. Çавăнпа пĕрлех тăван ен культурипе, чăваш халăхĕн историйĕпе паллаштарас ĕçе те уроксенче туса пымалла. Хуласенче тата посёлоксенче ӳсекен ачасем чăвашла калаçнине ăнланччăр, хăйсем те калаçма пултарччăр, чăвашла вулама-çырма пĕлччĕр, чăваш халăхĕн пуян историйĕпе, тĕрлĕ енлĕ культурипе кăсăкланччăр, халăхăмăрăн Раççейри тата пĕтĕм тĕнчери вырăнĕпе пĕлтерĕшне курма, туйма хăнăхчăр тесе ĕçлемелле.

Мĕне, мĕнле тĕп шухăшсене никĕсе хурса йĕркелемелле-ха хальхи вăхăтра тĕрлĕ халăх ачисене чăваш чĕлхи вĕрентес ĕçе? Паллах, ытти предметсене вĕрентнĕ чухнехи пекех дидактикăн пĕтĕмĕшле принципĕсене шута илмелле: материала ачасем ăнланса вĕренччĕр тесе ĕçлемелле, вĕрентĕве ачасен çулне, вĕсен аталанăвĕн шайне кура йĕркелемелле; пĕлĕве, хăнăхусемпе аслайсене çирĕп системăра парса пымалла; вĕрентĕвĕн содержанийĕ ăслăлăх енчен тивĕçлĕ шайра пулмалла, уроксенче ачасене пур енлĕн аталанмашкăн условисем туса памалла, вĕреннине тăтăшах аса илсе çирĕплетсе пымалла, курăм хатĕрĕсемпе анлă усă курмалла т. ыт. те. Уроксенче туяннă пĕлӳ-хăнăхусемпе тата ăслайсемпе вĕренекенсем кулленхи пурнăçра усă курма пултарччăр тесе ĕçлемелле. Вĕрентĕве пурнăçри пек е пурнăça çывăх йĕркелесси, чăвашла калаçма-хутшăнма вĕренме уроксенче хутшăну саманчĕсем йĕркелесси – тĕп шухăшсем. Вырăсла калаçса ӳсекен ачасем пурнăçра хăçан, мĕнле ситуацисенче, мĕнле темăсемпе чăвашла калаçма-хутшăнма пултараççĕ – çав темăсем, ситуацисем уроксенче пулмалла. Вăл е ку ситуацинче ачана чăвашла калаçма-хутшăнма мĕн кирлĕ (сăмахсем, пуплев пĕрлĕхĕсем, вĕсене йĕркелемелли грамматика хатĕрсем т.ыт.те) – пурне те уроксенче памалла.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Уроксенче пуплев ĕçĕ-хĕлĕсене (пуплеве итлесси-тăнлассине, калаçассине, вулассиçырассине) пĕр-пĕринпе тачă çыхăнтарса вĕрентсе пымалла. Ку тепĕр тĕп шухăш. Ачасен урокра пĕр темăпах калаçмалла та, вуламалла та, çырмалла та. Итлев-тăнлав ĕçĕсенче те, калаçу, вулав, çыру ĕçĕсенче те чĕлхен пĕр единицисемех пулмалла. Паллах, кашни ăслая, хăнăхăва аталантарма ятарласа йĕркеленĕ хăнăхтарусен системи пулмалла.

Иккĕмĕш е тăван мар чĕлхене вĕренес ĕç тăван чĕлхесĕр пулаймасть. Тăван чĕлхе тепĕр чĕлхене вĕренме пулăшать те, чăрмантарать те (транспозици, интерференци пулăмĕсем). Хăнăхтарусем пурнăçланă чух та, çĕнĕ материалпа ĕçленĕ чух та ачасен тăван чĕлхийĕ çине таянмах тивет, анчах çакна астумалла: ачасен пĕлĕвĕн, пуплевĕн шайĕ ӳссе пынă май тăван чĕлхе çине таянасси сахалрах та сахалрах пулмалла, çĕнĕ материалпа ĕçленĕ чух кăна ăна тăван чĕлхепе танлаштарса ăнлантарса пани вырăнлă.

Чăваш чĕлхине ытти предметсемпе çыхăнтарса вĕрентме майсем шыраммалла. Çакă, пĕр енчен, предметăн пĕлтерĕшне ачасен умĕнче çӳлерех çĕклет, тепĕр енчен, вĕсене чăвашла ытларах калаçтарма майсем пулаççĕ. Ачасем чăваш чĕлхине те хутшăну, пĕлӳ илмелли хатĕр пек йышăнма пуçлаççĕ. Паллах, кун пек ĕçлеме çӳллĕ шайри специалистсем кирлĕ, чăваш чĕлхине çеç лайăх пĕлни çителĕксĕр, ытти предметсемпе те пĕлӳ шайĕ пысăк пулмалла вĕрентекенĕн.

Уроксенче кашни ачапа уйрăмшарăн ĕçлеме тăрăшмалла, кашни ачана чăвашла калаçма-хутшăнма май килнĕ таран лайăхрах условисем туса пама тăрăшмалла.

Калаçу-тăнлу, вулав-çыру темисем пĕтĕмпех ачасен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, вăййи-куллипе çыхăнмалла. Ачасем уроксенче тăван енри хула-ял, юхан шыв, кайăк-кĕшĕк, йывăç-курăк ячĕсене чăвашла калама вĕренччĕр, чăваш халăхĕн ал ĕç культурипе, тăван енри паллă çынсемпе паллашса пыччăр. Çакă чăваш ачисене тăван халăха юратма, чăваш мар ачасене чăваш халăхне хисеплеме хăнăхтарса пырать. Халăх сăмахлăхĕн вакрах жанрĕсене (ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмахсене, ача-пăча сăвви-юррисене) вĕренӳ кĕнекисене кĕртни те вырăнлă.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарса пынă май пуплев этикетне вĕрентсе пырасси çинчен те манмалла мар, çавăнпа та уроксенче пуплев этикечĕпе çыхăннă хăнăхтарусемпе ĕçсем те пулмалла.

Материала класран класа спираль евĕр парса пыни выранлă. Ачасем пĕр темăсемпех калаçчăр, анчах çултан-çул вĕсен пĕлĕвĕ тарăнлансах, хăнăхăвĕсемпе ăслайĕсем анлăлансах, çирĕпленсех пыччăр.

Çӳлерех палăртнă шухăшсем вĕренĕвĕн патшалăх стандарчĕсемпе килĕшсе тăраççĕ, ĕç тĕллевĕсене, содержанине тата кĕтекен результатсене пĕр çыхăнура, системăра палăртма май параççĕ.

***Список литературы***

1. Федеральный государственный образовательный стандарт начального общего образования // Министерство образования и науки Российской Федерации [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://fgos.ru/ (дата обращения: 24.05.2019).

2. Федеральный государственный образовательный стандарт основного общего образования. // Министерство образования и науки Российской Федерации [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://fgos.ru/ (дата обращения: 24.05.2019).

3. Федеральный государственный образовательный стандарт среднего общего образования. // Министерство образования и науки Российской Федерации [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://fgos.ru/ (дата обращения: 24.05.2019).

4. Исаев Ю.Н. Состояние и перспективы развития системы образования Чувашской Республики // Образование: теория, методология, опыт / гл. ред. Ж.В. Мурзина – Чебоксары: ИД «Среда», 2019. – С. 5-29. – ISBN 978-5-6042436-9-5.

5. Примерная образовательная программа по учебному предмету «Родной чувашский язык» для общеобразовательных организаций с русским языком обучения (1–4 классы). // Реестр примерных основных общеобразовательных программ [Электронный ресурс]. – Режим доступа: http://fgosreestr.ru (дата обращения: 24.05.2019).



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

***References***

1. Federal'nyi gosudarstvennyi obrazovatel'nyi standart nachal'nogo obshchego obrazovaniia. *Ministerstvo obrazovaniia i nauki Rossiiskoi Federatsii*. Retrieved from https://fgos.ru/

2. Federal'nyi gosudarstvennyi obrazovatel'nyi standart osnovnogo obshchego obrazovaniia. *Ministerstvo obrazovaniia i nauki Rossiiskoi Federatsii*. Retrieved from https://fgos.ru/

3. Federal'nyi gosudarstvennyi obrazovatel'nyi standart srednego obshchego obrazovaniia. *Ministerstvo obrazovaniia i nauki Rossiiskoi Federatsii*. Retrieved from https://fgos.ru/

4. Isaev, Iu. N. (2019). Sostoianie i perspektivy razvitiia sistemy obrazovaniia Chuvashskoi Respubliki. *Obrazovanie: teoriia, metodologiia, opyt*, 5-29. Cheboksary: ID "Sreda".

5. Primernaia obrazovatel'naia programma po uchebnomu predmetu "Rodnoi chuvashskii iazyk" dlia obshcheobrazovatel'nykh organizatsii s russkim iazykom obucheniia (1-4 klassy). *Reestr primernykh osnovnykh obshcheobrazovatel'nykh programm*. Retrieved from http://fgosreestr.ru

---

***Игнатьева Валентина Ивановна*** *– канд. пед. наук, заведующий лабораторией БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии, Россия, Чебоксары.*

***Ignatieva Valentina Ivanovna*** *– candidate of pedagogical sciences, head of the laboratory at the BE of FVE «Chuvash Republican Institute of education» of the Ministry of education of Chuvashia, Russia, Cheboksary.*

***Игнатьева Валентина Ивановна*** *– педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литературине вĕрентес меслетлĕх лабораторийĕн ертӳçи, Раççей, Шупашкар хули.*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)